Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

15 (7549) № ✻ Эрне кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Эфирта - Президент

Юн кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров «Чăваш Ен» телерадиокомпани тата «Канал 5 плюс» журналисчĕсене интервью панă. Калаçу вăхăтĕнче Президентăн кăçалхи Çырăвĕпе, ситес суйлавпа çыхăннă ыйтусене, социаллă пурнăçпа экономикăн тĕрлĕ ыйтăвне çĕкленĕ.

Николай Федоров панă интервьюна Чăваш телекуравĕпе тунти кун, нарăсăн 25-мĕшĕнче, 11 сехет те 10 минутра кăтартĕç. «Вести 24» телеканал нарăсăн 27-мĕшĕнче 19 сехет те 20 минутра эфира кăларать. «Канал 5 плюс» Президентпа журналистсен калаçăвне нарăсăн 24-мĕшĕнче, вырсарни кун, 19 сехетре «Обзор местности» программăра кăтартать, нарăсăн 25-мĕшĕнче 7 сехетре тепĕр хут эфира кăларĕ.

Чăваш Республикипе паллашаççĕ

Иртнĕ эрне кун Раççей Федерацийĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче Чăваш Республикин презентацийĕ пулнă. Ăна Раççейĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сергей Лавров, федераци ведомствисен ертӳçисем, Федераци Канашĕн членĕсем тата Раççей Патшалăх Думин депутачĕсем, ют çĕршывсен элчисем тата пĕтĕм тĕнчери ĕçлĕ пĕрлĕхсен представителĕсем пысăк хак панă. Раççейĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче палăртнă тăрăх, пирĕн çĕршыври регионсен нихăш презентацийĕ те чикĕ леш енчи хăнасене çакăн пек вăйлă кăсăклантарайман. Презентацие килнĕ 60 яхăн патшалăх дипломачĕсем хальхи Чăваш Ен пурнăçĕпе уйрăмах интересленнĕ, вĕсем республикăпа нумай енĕпе пĕрле ĕçлеме хатĕррине пĕлтернĕ.

2007 çулхи экономика ăмăртăвне пĕтĕмлетрĕмĕр

Тăрăшса ĕçлекенсене чыс та мухтав!

Çĕнĕ çула кĕнĕ май малалла пăхакан хуçа иртнĕ ĕçсене пĕтĕмлетет, вĕсене тишкерсе тĕрĕс хак парать, çак никĕс çинче пуласлăха палăртать. «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ иртнĕ çула районта пуринчен те ăнăçлăрах вĕçлерĕ. Çак ӳсĕмре хуçалăхра вăй хуракан кашни ĕçченĕн тӳпи пур. Çапла шутлать ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи Ростислав Николаевич Тимофеев. Апла пулсан район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ дипломпа** куçса çӳрекен вымпела тата 10 пин тенкĕ укçан парнене çĕнсе илни те – «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн пĕрлехи çимĕçĕ. Хуçалăх пĕлтĕр 100 гектар çĕр пуçне 120,3 центнер аш-какай, 686,9 центнер сĕт туса илнĕ, кашни ĕне пуçне 5035 килограмм сĕт сунă, сыснасене талăкра вăтамран 375 грамм, мăйракаллă шултра выльăха 654 грамм ӳт хуштарнă, хуçалăхри выльăхсен 99 процентне упраса хăварнă. Çак пĕтĕмĕшле кăтартура паян эпир Çĕньял Шурчари сĕт ферминче саккăрмĕш çул машинăпа ĕне сăвакан оператор пулса ĕçлекен Ольга Витальевна Петрова хăйне евĕр уйрăм пысăк ӳсĕм турĕ: хăй ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 5764 килограмм сĕт суса районти хăйĕн ĕçтешĕсем умĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов «Герой» хуçалăх ертӳçине Р. Тимофеева дипломпа парнесем панă самант; Ольга Витальевна Петрова çĕнтерӳçĕ-доярка («Герой»).

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Февралĕн 23-мĕшĕ - Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ

Раççей армийĕпе флотĕнче службăра тăракансем, сапаçри рядовойсемпе офицерсем, Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçин тата Хĕç-пăшаллă Вăйсен ветеранĕсем!

Сире пĕтĕм халăх кунĕпе, чунпа та ĕçпе паттăр çынсен уявĕпе – Тăван Çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕпе – саламлатăп!

Раççей историйĕ унăн çар пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Вăл вара Раççей халăхĕн мухтавлă енĕ. Эпир хамăрăн паттăр хӳтĕлевçĕмĕрсене юрататпăр, хисеплетпĕр, вĕсемпе мăнаçланатпăр. Çар ăсталăхĕпе çар çыннисен уйрăм паттăрлăхĕ – вырăс салтакĕсемпе офицерĕсен йăлари пахалăхĕ. Пирĕн çар малашне те çĕршыв хăрушсăрлăхĕн, Раççей аталанăвĕн çирĕп никĕсĕ пуласса шанатăп.

Кашни килте асаттесемпе аттесен паттăрлăхне упраççĕ, паян çĕршыв хăрушсăрлăхĕн хуралĕнче тăракансемпе мухтанаççĕ. Раççейре пурăнакан кашни çын – çар постĕнче тăрать-и вăл е мирлĕ ĕçе чунне парса пурнăçлать – чăн малтанах Тăван Çĕршыв хӳтĕлевçи. Пирĕн паянхи парăм вара – вырăс çарĕн мухтавлă енĕсене упраса хăварасси. Вĕсем паян хĕç-пăшаллă вăйсенче, кадет шкулĕсемпе Суворов училищисенче çĕнĕрен чĕрĕлеççĕ.

Чунтан-чĕререн Сире çирĕп сывлăх, чун паттăрлĕхĕ, ăнăçу, телейлĕ малашлăх сунатăп!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.

Хаклă ентешсем! Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, вăрçăн йывăр çулĕсене чăтса ирттернĕ тыл ĕçченĕсем, воин-интернационалистсем, çара кайма хатĕрленекен çамрăксем!

Сире пурне те Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Çак уяв вăл Тăван çĕршыва юратакансен, паттăрлăхпа хăюлăх уявĕ. Çĕршыва хӳтĕлесси – пирĕн çĕршыври кашни çыннăн чыслă та хисеплĕ тивĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтерӳ тунă ветерансемпе тыл ĕçченĕсен умĕнче эпир ĕмĕрĕпех парăмра. Вĕсем ситĕнекен ăрăва патриотизмла воспитани параççĕ, çамрăксем вĕсенчен тĕслĕх илсе ӳсеççĕ. Ку чăннипех те çаплах пулнине çар конфликчĕсене хутшăннисен паттăрлăхĕ те çирĕплетсе парать. Афган вăрçинче те, ытти «вĕри точкăсенче» те пирĕн салтаксем çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. Тавах паттăр ывăлсем çитĕнтернĕ салтак амăшĕсене.

Çĕршыв тĕрекĕ пирĕнтен кашнинчен килет. Çĕршыв хушсан, нимрен шикленмесĕр паянхи салтаксем те паттăрлăх çулĕ çине тăраççĕ. Пирĕн вара хамăрăн тăрăшуллă ĕçпе район, республика, Раççей çирĕплĕхĕшĕн тимлемелле. Кăçал Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕнче хамăр ачасене аслă ăрури паттăр салтаксен ырă тĕслĕхĕ çинче воспитани парассине тĕпе хурасчĕ, вĕсене ырă кăмăллă пулма, ырă ĕçсем тума, Тăван çĕршыва юратма хăнăхтарса ӳстересчĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳпе юрату, тату пурнăç, вăрăм кун-çул сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Уважаемые жители Моргаушского района!

Сердечно поздравляю вас с праздником воинской доблести – Днем защитника Отечества.

Во все времена защитники России были сильны боевым духом, их отличали высокая организованность, сплоченность и готовность отдать свою жизнь за Родину. Отечество высоко ценит ратный труд своих граждан. Нынешнее поколение достойно продолжает славные традиции своих отцов и дедов.

Желаю вам здоровья, мирного неба над головой, благополучия, счастья, душевного спокойствия, тепла и уюта в вашем доме.

Н.М. БУДАРИН, депутат Государственной Думы, летчик-космонавт, Герой России.

ЗАО МСО «Моргаушская» поздравляет всех мужчин с Днем защитника Отечества. Желает крепкого здоровья, счастья, успехов во всем.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

Суйлава хатĕрленеççĕ

Февралĕн 19–21-мĕшĕсенче районта суйлав участокĕсен суйлав комиссийĕсен председателĕсемпе секретарĕсен вĕренĕвĕ иртнĕ. Февралĕн 20-мĕшĕнче территори суйлав комиссийĕнче 538–554-мĕш суйлав участокĕсен суйлав комиссийĕсен председателĕсемпе секретарĕсем хăйсен пĕлĕвне анлăлатнă.

Вĕренĕве «Суйлав кунĕ» ĕç вăйăйинчен тытăннă. Пурте интересленсех тата хĕрӳлĕхпе ĕçе пикеннĕ, суйлав кунĕнче хăйсем мĕнле лару-тăрура пулма пултарнине тишкернĕ. Территори суйлав комиссийĕн членĕсем участоксенчи суйлав комиссийĕсен суйлавçăсемпе ĕçлессин, суйлавçăсен списокĕпе ĕçлессин, комиссисен сасăлав итогĕсем тăрăх протоколсем çырассин ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă.

Кашни комиссиен Раççей Федерацийĕн Президенчĕн суйлавне хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе методикăпа информаци материалĕсемпе тивĕçтернĕ.

Хыççăн вара кун пек занятисем 555–572-мĕш суйлав участокĕсен суйлав комиссийĕсен членĕсемпе иртнĕ.

«Ашшĕн çемьери вырăнĕ»

Раççейре Çемье çулталăкĕ пырать. Районта çемье ыйтăвĕсемпе тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар пулса иртеççĕ. Çак кунсенче район администрацийĕн савăнăçлă йăлайĕркесем ирттермелли залĕнче «Ашшĕн çемьери вырăнĕ» темăпа çавра сĕтел йĕркеленĕ. Унта районти хĕрарăмсен канашĕн членĕсене, ял тăрăхĕсенчи хĕрарăмсен канашĕсен членĕсене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене чĕннĕ.

Çавра сĕтел хушшинчи калаçава районти тĕрлĕ шайри ответлă ĕçченсем, вĕрентӳ учрежденийĕсен педагог-психологĕсем хутшăннă.

В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

Кун пек тĕл пулусене кĕтеççĕ

Юн кун республикăра пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В. К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш республикинчи уйрăмĕ – патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Р.А. Кондратьева, «РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ» патшалăх учрежденийĕн ертӳçин çумĕ М.А. Денисова, РФ социаллă страховани фончĕн Чăваш республикинчи регион уйрăмĕн ертӳçин çумĕ Т.Б. Алексеева килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн иртнĕ çулхи социаллă-экономика аталанăвĕпе, кăçалхи пĕрремĕш уйăх пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарчĕ. Çавăн пекех çитес вăхăтра татса памалли ыйтусемпе вĕсен çул-йĕрĕ çинче те чарăнчĕ.

Унтан хăнасем виçĕ ушкăна пайланса район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле районти ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкăн районти Культура çуртĕнче иртнĕ районти выльăхчĕрлĕх пăхакансен канашлăвне килнисемпе тĕл пулчĕ.

М.А. Денисовапа Т.Б. Алексеева ертсе пыракан ушкăн вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пулчĕ. Малтанах кунти райпо коллективĕпе тĕл пулчĕ. Ытти çĕрти пекех, информаци кунĕнче кунта та ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвне сӳтсе яврĕç. Çывхарса килекен РФ Президенчĕн суйлавĕн теми те тĕп вырăнта пулчĕ. Тамара Борисовна çак темăсемпе калаçнă май Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисене пĕрлештересси çинче те чарăнчĕ. Икĕ хула хушшинчи çӳп-çап тăкмалли вырăна хупса ун вырăнĕнче йывăçчечек çитĕнтересси, икĕ хулана çак вырăнта ӳссе ларакан тепĕр çĕнĕ хула пĕрлештересси пирки те каларĕ. Çавăн пекех вăл Çырура палăртнă республикăн иртнĕ çулхи ĕçĕсемпе паллаштарнă май умра тăракан задачăсем йăлтах халăх пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнтарнине палăртрĕ. Социаллă тӳлевсене индексацилеççĕ тата ытти те.

Мăн Сĕнтĕрти аслă классенче вĕренекенсемпе иртернĕ тĕл пулу вара чылай чĕрĕрех иртрĕ. Çамрăксене вырăнти ыйтусем те канăç памаççĕ иккен. Вĕсен ыйтăвĕсене хуравланă май Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков Мăн Сĕнтĕрти çӳп-çап тăкмалли вырăна кăçал хупасси, ăна урăх çĕрте тăвас ĕç мĕнле шайра пулни пирки каларĕ. Аслă класс хĕрĕсене Мăн Сĕнтĕрте ача садĕнче вырăнсем çукки те пăшăрхантармасть мар иккен. Геннадий Петрович каланă тăрăх, кунта паян 30 ача ача садне лекмелли черетре. Мăн Сĕнтĕрти шкул ачисем спортпа туслă пулни те палăрчĕ. Физкультурăпа спорт комплексĕ мĕншĕн Мăн Сĕнтĕрте мар-ши, тени те çакнах çирĕплетсе парать. Юлашкинчен çамрăксем çакнашкал тĕл пулусем кирлине, вĕсем интереслине палăртрĕç.

Тепĕр информаци ушкăнĕ Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕ. Кашни ушкăнĕ тĕл пулусенче палăртнă хăш ыйтусене мĕнле татса памаллине палăртрĕ.

Л. ПАВЛОВА.